Ырă ĕçсен çулталăкĕнче

# Ашшĕ-амăшĕсен савăнăçĕ

Ялти ачасенчен ытларахăшĕ Муркаш шкулне çÿренĕ май нумаях пулмасть Хорнуйĕнче пуçламăш шкула хупнăччĕ. Шкул çурчĕ пушах ларчĕ. Ял çыннисем вара ырă сĕнÿпе тухрĕç – кунта ача сачĕ уçсан епле-ши?

Ашшĕ-амăшĕсен, кунти ĕçченсен вăйĕпе юсав ĕçĕсем туса ирттерчĕç. Ашшĕ-амăшĕсенчен П.И. Смирнов, В.Н. Смирнова, А.Н. Ванюшкин, Г.Н. Иванова, ача садĕнче ĕçлекенсем Л.И. Сидорова, В.М. Ершов, В.М. Кольцов, М.И. Саптеева ырми-канми тăрăшрĕç. Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхĕн В.А. Любимован тÿпи те пысăк ку ĕçре. Нумай пуçлăх патне çул такăрлатнă вăл, кирлĕ япаласене тупса килес тесе пуçне ватнă.



Ача сачĕпе юнашарах пысăк та илемлĕ сад, садпа юнашарах пахча çимĕç лартса çитĕнтермелли лаптăк пур. Çак ял тăрăхĕн территорийĕнчи М.А. Николаева, С.Н. Матвеева, З.Г. Купцова, Н.И. Борисова культура ĕçченĕсем, ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе специалисчĕ В.А. Любимовапа Г.Г. Петрова та ку ĕçрен айккинче тăрса юлмарĕç, ача сачĕ валли çĕр улми, тĕрлĕ пахча çимĕç лартса хăварчĕç.

Çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕнче ача садне официаллă майпа уçрĕç. Çак савăнăçлă мероприятие район администрацийĕн представителĕсем В.В. Романова тата Л.Г. Федорова хутшăнчĕç, пухăннисене çак ырă пулăмпа саламларĕç, ача садне уçма пулăшакансене парнесем пачĕç. Саламлакансем шутĕнче «Путене» ача сачĕн ертÿçи И.В. Ферапонтова та пулчĕ.

Хыççăн вара Хорнуй клубĕ çумĕнчи художество пултарулăх ушкăнĕ, С. Михайлов, В. Михайлов, М. Ванюшкин, А. Никитин пуçламăш шкулта вĕренекенсем курма пуçтарăннисене концертпа савăнтарчĕç.

**Н. БОРИСОВА,**
**Хорнуй ялĕнчи библиотека библиотекарĕ.**

2008 çул – Çемье çулталăкĕ

# Ятлă çынна ял савать

«Çемье – халăхпа патшалăх тĕрекĕ. Çирĕп те туслă çемье пурнăçра тĕл пулакан нимĕнле йывăрлăхран та хăрамасть»,– тенĕ чăвашсене çутта кăларассишĕн нумай ĕçленĕ И.Я. Яковлев чăваш халăхне панă хăйĕн халалĕнче. Кашни çыннăн çемье çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен çемьере кăна этем тулли пурнăçпа телейлĕ пурăнать, тухăçлă ĕçлет. Çемьере килĕшÿ, юрату пулсан, пĕр-пĕрне ăнлансан, кирек епле ĕç те ăнса пырать.

2008 çул – Ырă ĕçсен тата Çемье çулталăкĕ. Ятлă çынна ял савать, теççĕ халăхра. Хăйсен ырă ĕçĕпе, ăшă кăмăлĕпе Чамăш ял çыннисен хушшинче хисепе тивĕçнĕ çемье – Волковсен çемйи. Ку чăнах та çапла. Мĕншĕн тесен пĕр ялта е урамра пурăнакансем кам мĕнле пурăннине пурте лайăх пĕлсе-курса тăратпăр.

1983 çулхи июнĕн 17-мĕшĕнче Александр Сергеевич Вăрманкасси хĕрĕпе Римма Петровнапа çемье çавăрнă. Саша 1977 çулта Шупашкарти плановă экономика техникумĕнчен вĕренсе тухнă. 1982 çултанпа «Моргаушагропромхимия» пĕрлешÿре аслă бухгалтер пулса ĕçлет. Йывăç хитре çимĕçĕпе, çын вара – ĕçĕпе. Ĕç вăл – пурнăç тыткăчи, тесе ахальтен каламан. Юратнă ĕçре вăй хурсан, çын чун-чĕрепе унта турттăнать. Вăл 2001 çулта «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ экономисчĕ» ята тивĕçнĕ.

Мăшăрĕ, Римма Петровна, ял хуçалăх институтне 1982 çулта ăнăçлă вĕренсе пĕтерсе алла диплом илет. Хăйĕн пурнăç çулĕнче ытларах «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн уй-хирĕсемпе çаранĕсем тăрăх утма лекнĕ çак пултаруллă, çĕр ĕçĕнче пиçĕхнĕ хастар уй-хир бригадирне. Халĕ вăл çак хуçалăх хăрушсăрлăх техникин инженерĕ пулса ĕçлет, профсоюз комитечĕн председателĕ. Тăрăшса ĕçленине хуçалăх правленийĕ асăрхамасăр хăварман. Римма Петровнана сахал мар хаклă парнесемпе Мухтав хучĕсемпе парса чыс тунă.

Волковсем виçĕ хĕр çуратса пăхса ÿстернĕ. Вĕсене мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарма, тĕрĕс воспитани пама тăрăшаççĕ. Ачисем те ашшĕ-амăшĕнчен ырă тĕслĕх илсе тăрăшса вĕреннĕ, икĕ хĕрĕ аслă пĕлÿ илнĕ.

Июнĕн 17-мĕшĕнче Волковсен çемйинче уяв пулчĕ – кĕмĕл туй уявларĕç вĕсем. Çак уявпа чысласа кÿршисем, хĕрĕсем тăнăç пурнăç, çирĕп сывлăх, телейпе савăнăç сунчĕç Александр Сергеевичпа Римма Петровнăна. «Эсир пирĕншĕн ĕмĕрех тĕслĕх пулнине ĕненетпĕр, малашне те сирĕн хĕвел пек ăшă кăмăлусемпе савăнса пурăнасса шанатпăр»,– терĕç хĕрĕсем.

**СКВОРЦОВСЕМ, КУРБАНОВСЕМ, СИДЮШКИНСЕМ, ЕРШОВСЕМ, ВЕРШКОВСЕМ,**
**вĕсен кÿршисем.**

Район прокуратуринче

# Сывлăх ыйтăвĕ малта пулмалла

Вĕрентÿ учрежденийĕсене медицина хатĕрĕсемпе тата эмелсемпе йĕркеллĕ тивĕçтерни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни каламасăрах паллă. Ку вăл сывлăхпа çыхăннă. Çавна шута илсе район прокуратури ку ыйту çине епле тимлĕх уйăрнине палăртма тĕрĕслев ирттерчĕ.

Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче медицина енĕпе тивĕçтерессине кунти медицина персоналĕ е килĕшÿ туса территори сиплевпе профилактика учрежденийĕ туса пырать. Медицина енĕпе тивĕçтерессипе йĕркелÿпе методика ĕçĕ-хĕлĕ те ун çинчех. Медицина кабинечĕсенче ятарлă оборудованипе инструментсем пулмалла.

Прокуратура тĕрĕслевĕ кăтартса панă тăрăх, вĕрентÿ учрежденийĕсенче ятарлă медицина кабинечĕсем питĕ сахал. Акă районти пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан 27 шкултан Муркаш шкулĕнче кăна уйрăм медицина кабинечĕ пур, шкул çулне çитмен 19 ача-пăча учрежденийĕнчен – 14-шĕнче. Çитменнине хăшĕсенче ансат медицина оборудованийĕ те çук.

Сăмахран, «Путене» ача садĕнчи медицина кабинетĕнче кушетка, кантăк хупăлчаллă медицина сĕтелĕ, укол тумалли хатĕрсен пуххи, ура пусса уçăлакан хупăлчаллă витре, динамометр, офтальмологи тата отоларингологи оборудованийĕн сĕтел çинчи лампи, фонендоскоп тата ытти кирлĕ оборудовани çук. Кунсăр пуçне ача сачĕн медицина сестри И.П. Пугачева хăйĕн квалификацине ÿстермесĕрех ĕçлет. «Мечтара» (Е.Г. Мишакова), «Колокольчикре» (Н.Н. Трихалкина) те çакăн пек лару-тăрăвах.

Вĕрентÿ учрежденийĕсене медицина хатĕрĕсемпе тата эмелсемпе тивĕçтерессине Муркаш шкулĕнче, «Золушка», «Мечта», «Радуга», «Колокольчик» ача сачĕсенче, Катькассинчи шкул-ача садĕнче тата ытти çĕрте йĕркеллĕ пулса пымасть. Çапла вара асăннă учрежденисен ертÿçисем ачасен сывлăхне сыхлассипе тата çирĕплетессипе кирлĕ условисем туса парассипе çине тăмасççĕ. Уншăн вара чи малтанах вĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Район администрацийĕн вĕрентÿ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ те тĕрĕслев ĕçне вăйсăрлатнă.

Тĕрĕслев материалĕсем тăрăх тупса палăртнă çитменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтерме вĕрентÿ учрежденийĕсен ертÿçисем тĕлĕшпе район прокурорĕ представленийĕсене тăратнă.

**Е. ЕГОРОВ,**
**район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.**

Вулакан пултарулăхĕ

# Улăпла утатпăр Улăп çĕрĕнче

Çирĕм пĕрмĕш ĕмĕр саккăрмĕш çулне
Çитрĕ Чăвашьен(ĕм) пур халăхпа пĕрле.
Çирĕп пирĕн утăм, ĕмĕтсем иксĕр...
Улăпла утатпăр Улăп çĕрĕнче.

Асăмра тытатпăр иртнĕ кунсене,
Умăмра куратпăр анлă çулсене.
Еткерĕм мăнаçлăн ешер, чечеклен.
Çĕр-шывăм хастаррăн çĕклен, илемлен.

Ют çĕрсем нумай, тен, чаплă, хитрисем,
Хулисем те пысăк, капăр çыннисем.
Эс вара, ман çĕрĕм, маншăн чи паха,
Çук сан пек илемлĕ, çук сан пек хакли.

Сăнаса пăхмашкăн хăтлă та капмар
Мускавпа Нью-Йорк та, Сочи те Самар.
Çук çав, ăшăтаймĕç ман чуна вĕсем.
Маншăн Чăваш çĕрĕ – чĕрери хĕлхем.

Пур чунтан саватăп хамăр хирсене,
Мухтаса юрлатăп хăтлă ялсене.
Шупашкарăм маншăн пуринчен паха,
Анлă Атăл шывĕ, эс çĕклен чуна.

Çирĕм пĕрмĕш ĕмĕр саккăрмĕш çулне
Ыр ĕçсен çулталăкĕ терĕç килĕшсе.
Калани ан кайтăр çиплеле вĕçсе,
Кашни сăмахне халь çирĕплет(ер) ĕçпе.

**О. КЛЕМЕНТЬЕВА.**


## Пĕлтерÿсем. Объявления

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:070505:111, местоположение: участок находится примерно в 880 м по направлению на юго-восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Ториково, дом 7, площадью 6237 кв.м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве собственности, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель населенных пунктов, с кадастровым номером 21:17:101001:108, местоположение: участок находится примерно в 75 м по направлению на юг от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Семенькасы, ул. Центральная, дом 58, площадью 2960 кв.м. Рыночная стоимость участка составляет 1172 (одна тысяча сто семьдесят два) рубля 78 копеек.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

**Срочно требуется механизатор на трактор К-700 для обработки паров. Обращаться в отдел сельского хозяйства администрации Моргаушского района. Тел.: 2-13-33, 8-903-066-55-80 (В.К. Ананьев), 8-960-300-23-52 (А.И. Павлов).**

**К СВЕДЕНИЮ ВОДОПОТРЕБИТЕЛЕЙ**
**Б. Сундырского, Кадикасинского, Москакасинского, Юнгинского сельских поселений.**

В соответствии с действующим законодательством о местном самоуправлении и статьей 14 Федерального Закона от 06.10.2003 г. № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», на основании решения Собрания депутатов Моргаушского района ЧР № С-22/6 от 30.11.2007 года с 1 марта 2008 года водобашни и водопроводные сети, находящиеся на территории Б. Сундырского, Кадикасинского, Москакасинского, Юнгинского сельских поселений, были переданы из муниципальной собственности Моргаушского района в муниципальную собственность сельских поселений Моргаушского района ЧР.

Для качественного и своевременного обслуживания водопроводных сетей и водобашен и бесперебойного водоснабжения населения водой на хозяйственно-питьевые нужды создано ООО «Жилкомсервис» Моргаушского района ЧР, которое осуществляет обслуживание и владение объектами водоснабжения на правах аренды.

Всем потребителям - населению и предприятиям указанных сельских поселений необходимо заключить договора на потребление и получить абонентские книжки в ООО «Жилкомсервис» по адресу: с. Б. Сундырь, ул. Советская, д. 32 или у представителя ООО «Жилкомсервис» - кассира до 1 июля 2008 г.

Плату за водопользование можно внести в отделении почтовой связи по месту жительства по квитанции абонентской книжки.

Просим всех водопотребителей быть добросовестными и своевременно заключить договора, получить абонентские книжки и оплатить плату за водопотребление.
Тел.: 52-4-50, 52-4-38.

Администрация ООО «Жилкомсервис» Моргаушского района ЧР.

**Спутниковые антенны *ТРИКОЛОР* с установкой, регистрацией и обслуживание. Тел.: 8-905-345-77-19.** 8-12.

Реализуем: кольца для колодцев ж/б D-0,7м, D-1,0 м, D-1,5 м, крышки, днища к ним, цемент. Услуги манипулятора. Доставка. Тел.: 67-82-52, 8-902-327-82-52. 7-11.

Продаю кирпич: силикатный, красный одинарный М-150, М-125, красный полуторный пустотный М-125, КББ, керамзит, гравмассу, красный половняк.
Тел.: 8-903-358-20-97, 44-20-97. 9-15.

Халăхран лайăх хакпа вăкăр, тына, ĕне ашĕн тата чĕрĕ виçепе туянатпăр. Тел.: 8-909-304-08-81.

Виççĕ пăрулана хĕрлĕ ĕне сутатпăр. Ыйтса пĕлмелли тел.: 8-927-840-39-69.

Продаю ВАЗ 21-04-7 2002 года выпуска, цвет балтика, один хозяин, музыка МР-3, зимние шипованные резины. Цена 65000 рублей. Тел.: 8-960-308-47-60.

Утерянный аттестат на имя Димитриева Валентина Александровича, выданный Тиушской общеобразовательной школой № 7235733 с. Тиуши Моргаушского района Чувашской Республики, считать недействительным.

В магазин бытовой техники «Лидер» срочно требуется продавец-консультант, муж. от 20 лет. Оплата своевременная.
Обращаться по тел.: 2-13-80 или 8-917-675-48-31.

Продаю блоки керамзитобетонные, шифер семи-, восьмиволновый, щебень, щебень кирпичный, гравмассу, песок речной. Требуется водитель на КамАЗ-цементовоз. Обращаться по тел.: 8-903-379-16-62, 8-919-666-55-77 (плодокомбинат). 3-3.

Срочно продаю двухкомнатную квартиру в центре села Моргауши по цене 1250000 рублей.
Тел.: 8-927-854-29-97. 1-2.

Продаю пчелосемьи с ульями. Адрес: д. Большие Токшики. Тел.: 8-960-309-09-92.

Кашмаш ялĕнче вырăнта пурăнмалли кирпĕчрен купаланă çирĕп çурт ытти хуралтăсене пĕрле сутатпăр, çут çанталăк газне кĕртнĕ, çĕрĕ 0,40 га. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-960-305-71-31, 8-960-312-53-86.

Приглашаем на сезонную работу трактористов-машинистов и водителей. Заработная плата от 10000 рублей в месяц. Тел.: 63-2-79, 63-2-48, 8-927-864-31-33. 1-2.



Моргаушская районная газета «Çĕнтерÿ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 17.06.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3637.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.